25-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
МАЙ
14
КӖÇНЕРНИКУН
110(6045) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Çӗршыв оборонин гектарӗсем

Хайӗн историллӗ приказӗнче Сталин юлташ пирӗн çӗршыв умне пысӑк задача кӑларса тӑратрӗ: 1942 çулта [illegible] Çак задачӑна пурнӑçа кӗртсе тесен, пирӗн çӗршыв оборонине тӗреклетмелле, кашни рабочин, кашни колхозникӗн, кашни интеллигентӑн [illegible]

Çак чухне илсен, Краснодар крайӗнчи Выселковски районри Крупская ячӗпе тӑракан колхоз [illegible]

Ирсӗр çынсене Гитлерӑн бандичӗсем [illegible]

[illegible]

Çак çӗре Краснодар крайӗнчи Крупская ячӗпе тӑракан колхоз [illegible]

Краснодар крайӗнчи Крупская ячӗпе тӑракан колхоз пуçарӑвне пирӗн республикӑри 1101 колхоз сӳтсе-явса, оборона фондне хывма тата [illegible] 2522 гектар тырпул акма [illegible] Советски районри колхозсем 200 гектар, [illegible] 165 гектар, Калинин районӗнчи [illegible] колхозсем 150-шар гектар акса хӑварма палӑртнӑ. Çапла ӗнтӗ, пирӗн республикӑри чылай районсемпе колхозсем çак ӗçе тивӗçлипе хакларӗç.

Халӗ колхозсен уйхирӗсенче çураки кӗрсе пырать. Хӑшпӗр колхозсем çураки планне тултарчӗç те ӗнтӗ. Кунпа пӗрлех вӗсем оборона гектарӗсем акас ӗçе те манмарӗç. Краснодар крайӗнчи колхозниксен чӗнӗвӗ çине ответлесе хӑйсем илнӗ обязательствӑсене вӗсем пӗрӗс пурнӑçа кӗртсе пыраççӗ. Сӑмахран, Шӑхасан районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз 10 гектар акса хӑварнӑ. Калинински районри «Красноармеец» колхоз оборона фондне хывма тата ирӗке тухнӑ колхозсене тӑванла пулӑшу пама 4 гектар акнӑ, çав районри «Комбайн» колхоз 3 гектар, «Социализм» колхоз 2 гектар акнӑ. Çакӑн пек тӗслӗхсем республикӑра нумай илсе кӑтартма пулать.

Пирӗн колхозсен кашниех планран ирттерсе акмалӑх çӗр лаптӑкӗ тупма пултараççӗ. Пӗр гектар е икӗ гектар планран ирттерсе акасси—колхозшӑн йывӑр ӗç пулса тӑмасть. Тӑван çӗршывшӑн вара вӑл пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан паха ӗç пулать, мӗншӗн тесен çапла майпа эпир планран ирттерсе çӗршер пин центнер тырпул туса илетпӗр.

Анчах пурин те, çак ӗçе хакламан руководительсем те пур-ха. Первомайски районри 43 колхозран 8 колхозӗнче кӑна Краснодар крайӗнчи колхозниксен чӗнӗвне сӳтсе-явса 12 гектар акса хӑварма обязательство илнӗ. ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗ ытти колхозсенче çак ыйтӑва сӳтсе-явса пурнӑçлас ӗçе организацилемен. Комсомольски, Шӑмӑршӑ районӗсенче те çу ӗç çине сиелтен пӑхаççӗ. Оборона гектарӗсем акса хӑварас тӗлӗшри çак сӳрӗклӗхе пӗтерес пулать. ВКП(б) райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсен вӑл ыйтупа кулленех тата конкретлӑ интересленсе ертсе пырас пулать.

Хӗрлӗ Çарпа çӗршыв умӗнче пысӑк задачӑсем тӑраççӗ. Вӑл задачӑсене пурнӑçлама тылра пӗтӗм вӑя мобилизацилесе ӗçлени кирлӗ. Фронта пулӑшасси, çӗршыв оборонине тӗреклетесси —кашни сехетре, кашни минутӑра туса пымалли ӗç. Çуракине кӗске срокра пысӑк пахалӑхпа туса ирттерни хыççӑн планран ирттерсе оборона гектарӗсем акса хӑварасси—кашни колхозӑн чыслӑ задачи пулса тӑрать.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Майӑн 12-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Майӑн 12-мӗшӗнче Керчь çурутравӗ çинче противника хирӗç вӑйлӑ çапӑçусем пынӑ. Фронтӑн ытти участокӗсенче нимӗнле паллӑ ӗçсемех те пулман.

Тӗрӗслесе палӑртнӑ даннӑйсем тӑрӑх, майӑн 10-мӗшӗнче нимӗçсенне малтан кӑтартнӑ пек 38 самолет мар, 60 самолет пӗтерсе тӑкнӑ.

Майӑн 11-мӗшӗнче нимӗçсен 42 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 16 самолет пӗтнӗ.

* * *

Майӑн 11-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаçӗсем нимӗçсен 4 танкне, войскӑсемпе боеприпассем турттарса пыракан 25 автомашинине, 3 полевой орудине тата гаубичнӑй батарейине, 18 миномӗтне, зенитнӑй пулеметсен 14 точкине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен 2 складне сирпӗнтерсе янӑ, горючи турттарса пыракан шхунӑна путарнӑ, чугунçул составне тата 2 паровоза çӗмӗрнӗ, противникӑн юланутçисен пӗр эскадронне тата пехотине 3 ротӑна çити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пирӗн боецсем Гуменюк юлташ командир пулса ертсе пынипе хӳтӗлесе тӑракан позицисене (Калинин фрончӗ) противник темиçе хутчен те йышӑнса илме хӑтланса пӑхнӑ. Нимӗçсен пур атакисене те, вӗсене пысӑк çухатусем кӳрсе, сирсе пӑрахнӑ. Пулӑшу илсе, противник çӗнӗрен малалла куçма хӑтланса пӑхнӑ. Пирӗн боецсем, татӑклӑн хирӗç пырса çапса, гитлеровецсене шурлӑха сирсе пӑрахнӑ та вӗсене пӗтӗмпе тенӗ пекех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пирӗн штурмовиксемпе истребительсен старши лейтенант Моспанов юлташ командир пулса ертсе пыракан группи (Кӑнтӑр фрончӗ) тӑшманӑн аэродромӗ çине ӑнӑçлӑн вӗçсе пырса тапӑннӑ. Пирӗн летчиксем нимӗçсен 19 самолетне çунтарса янӑ, 22 самолетне сиенленӗ.

* * *

Тюленев сержантӑн танксене хирӗç пемелли пӑшалӗн расчечӗ тӑшманӑн танкне çывӑха пыма панӑ та ун çине пеме тытӑннӑ. Танк çунса кайнӑ. Танкӑн экипажӗ пӗтӗмӗшпех пӗтнӗ.

* * *

Сывлӑшра нимӗçсен транспортнӑй самолечӗ вӗçсе пынине асӑрхаса илсе, Бердзенишвили сержантӑн отделенийӗнчи боецсем винтовкӑсенчен пеме тытӑннӑ. Темиçе хутчен харӑссӑн пенӗ хыççӑн самолет сиенленнӗ те ирӗксӗрех çӗр çине анса ларнӑ. Самолетӑн 4 çынран тӑракан экипажне тыткӑна илнӗ.

* * *

Сапер сержант Лахов, пирӗн пехота валли çул уçнӑ чухне, противник минӑсем хурса хӑварнӑ участок çинчен икӗ кун хушшинче 167 противотанковӑй тата 40 противопехотнӑй мина кӑларса сиенсӗрлетнӗ.

* * *

Тӑшманӑн мини лекнипе боеприпассен складне вут хыпса илнӗ. Политрук Чернышев, сержант Александров тата красноармеец Зайкин, хӑйсем пӗтессинчен хӑрамасӑрах, тӑшман персе тӑнӑ çӗртенех боеприпассене сирпӗнсе каясран çӑлса хӑварнӑ.

* * *

Партизансен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан пысӑк отрячӗ, Украинӑн нимӗçсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, юлашки вӑхӑтра гитлеровецсене темиçе хутчен вӑйлӑн пыра-пыра çапнӑ. Партизансем пӗр пин ытла гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, халӑх пурӑнакан темиçе пункта йышӑннӑ тата нумай винтовкӑсемпе пулеметсем, 200.000 патрон, радиостанци тытса илнӗ. Отряд противникӑн продовольстви хунӑ 2 складне çунтарса янӑ, боеприпассен складне тата чугунçул кӗперне сирпӗнтерсе янӑ. Совет патриочӗсем венгерсен 33-мӗш пехотнӑй полкӗн 3-мӗш батальонне çапса аркатнӑ. Штабра тытса илнӗ документсем хушшинче батальон командирӗ апрелӗн 26-мӗшӗнче полк командирӗ патне çырнӑ рапорта тупнӑ. Партизансене хирӗç кӗрешес ӗçри йывӑрлӑхсене кӑтартса парса, батальон командирӗ çапла çырать: «Салтаксем çапӑçма килӗшмеççӗ. Çимелли нимӗн те çук. Лашасене тӑрантармалли те çук. Партизансем пирӗн çине вӑйлӑн тапӑнаççӗ. Пирӗн тупӑ тата снарядсем нумай пурччӗ. Тупӑран переймерӗмӗр, снарядсем вара çухалчӗç. Мадьяр салтакӗсен кунта çапӑçма май килмест, мӗншӗн тесен вӗсем вырӑна тата çулӗсене пӗлмеççӗ. Партизансем вырӑна та, çулӗсене те лайӑх пӗлеççӗ. Мадьярсен нумай салтакӗсем вилсе тата аманса пӗтрӗç, партизансен вара вилнисемпе аманнисем çук».

* * *

Аяларахра нимӗçсен фельдфебелӗн Карл Шенкманӑн дневникӗнчен илнӗ уйрӑм вырӑнсене пичетлетпӗр:

«**1942 çулти февралӗн 17-мӗш.** Юнлӑ каç. Пирӗн çухатусем çавтери пысӑк. Манӑн нумай юлташсем вилчӗç. Вӗсем хушшинче: унтер-офицер Верцель, обер-ефрейтор Шмидт тата ефрейтор Баумгерн.

Мартӑн 7-мӗш. Канӑçсӑр талӑк. Противникӑн вутне тӳссе тӑма çук. Колхоза арӑн çитсе ӳкрӗмӗр. Çынсене килӗсенчен вӑйпах хӑваласа кӑларатпӑр. Лаша апачӗ çук. Йывӑр лару-тӑру.

Мартӑн 10-мӗш. Эпир питӗ ывӑнса çитнӗ. Наступлени татах ӑнӑçлӑ пулмарӗ. 3-мӗш взвод стройран тухрӗ. Ефрейтор Апфель, унтер-офицерсем Баумстпа Шонер вилчӗç, высотана пӑрахса хӑварма лекрӗ. Вырӑссен танкӗсем пӗрмаях флангсенчен атакӑлаççӗ.

Мартӑн 17-мӗш. Пирӗншӗн инкеклӗ кун килсе тухрӗ. 13 сехетре вырӑссем пире çавӑрса илчӗç. Вӑрçӑн мӗнпур хӑрушлӑхӗсене эпир халь кӑна туйса илетпӗр. Вырӑссен танкӗсемпе авиацийӗ пирӗн çине кашни кун тенӗ пекех пӗр хӗрхенмесӗр переççӗ, бомбӑсем тӑкаççӗ. Çӗрле каялла чакма приказ илтӗмӗр. Вилнисемпе аманнисем питӗ нумай...»

* * *

Сумы облаçӗнчи Невля поселокӗнче гитлерла ирсӗрсем мирлӗ пурӑнакан 18 çынна, вӗсене тимӗр çекӗлсемпе янах шӑммисенчен çаклатса илсе, çакса вӗлернӗ.

Майӑн 13-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Майӑн 13-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле фронтра нимӗнле паллӑ ӗçсемех те пулман.

* * *

Кӑнтӑр фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть противникӑн оборона тумалли çирӗплетнӗ пунктне йышӑнса илнӗ. Çапӑçура гитлеровецсене 150 çынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Нимӗç салтакӗсен чылай пысӑк ушкӑнне тыткӑна илнӗ. Пирӗн боецсем противникӑнне 3 оруди, шултра калибрлӑ 2 пулемет, 32 автомат, 13 пулемет, 150 винтовка, радиостанци тата боеприпассем тытса илнӗ.

* * *

Калинин фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чаçӑн боецӗсем икӗ кун хушши çапӑçса нимӗçсен 5 орудине, 5 станковӑй пулеметне тата 4 миномӗтне пӗтерсе тӑкнӑ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 700 çын вилнӗ тата аманнӑ.

* * *

Нимӗçсен бомбардировщикӗсем вӗçсе килсе тапӑннӑ вӑхӑтра Полосухин командирӑн чаçӗнчи зенитчиксем «Юнкерс-87» йышши 3 самолета персе ӳкернӗ. Парашютпа сикнӗ летчика — Эрих Борман ефрейтора тыткӑна илнӗ.

* * *

Старши лейтенант Шеретнев батарейинчи миномӗтчиксем юлашки кунсенчи çапӑçусенче нимӗç пулемечӗсен 12 точкине, миномӗтсен 2 батарейине, боеприпассем тиенӗ 4 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ, 30 дзота çӗмӗрнӗ тата боеприпассен 5 складне çунтарса янӑ.

* * *

Красноармеец-автоматчик Алексей Павлович Гузеев икӗ çӗртен аманнӑ пулнӑ, анчах çапах та тӑшмана хирӗç паттӑррӑн çапӑçнӑ. Вӑл нимӗçсен блиндажӗ патне шӑвӑнса пынӑ та автоматран персе тата гранатӑсем ывӑтса 20 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, ручной пулемет тытса илнӗ.

* * *

Л. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячӗ, нимӗçсен тылӗнче Ленинград тата Калинин облаçӗсен районӗсенче кӗрешекенскер, икӗ уйӑх хушшинче нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсене 900 çынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Партизансем чугунçул çинчи эшелона, икӗ автодрезинӑна ӳпӗнтерсе янӑ, темиçе кӗпере сирпӗнтернӗ тата нимӗçсен фашистла оккупанчӗсен продовольстви хунӑ 2 базине тытса илнӗ.

* * *

Нимӗçсен 57-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 217-мӗш полкӗнчи 3-мӗш батальонран тыткӑна лекнӗ ефрейтор Иоганн Майер çапла каласа панӑ: «...Германи халӑхӗн шухӑш-кӑмӑлӗ питех пусӑрӑннӑ. Гитлер пуçланӑ вӑрçа нумайӗшӗ ӑссӑр япала тесе шутлаççӗ. Кӑçалхи март уйӑхӗччен эпӗ Мюнхенри мотоциклетсем тӑвакан заводра ӗçлерӗм. Кун касиччӗнех рабочисем хӑйсем хушшинче нимӗн çинчен те калаçмаççӗ. Кашниех гестапон вӑрттӑн агенчӗсенчен хӑрать. Паровозсемпе вагонсем тӑвакан заводра темиçе пин рабочи ӗçлет, çав заводра забастовка пулса иртрӗ. Администраци полицие чӗнсе илчӗ, полици рабочисене туясемпе хӑваласа цехсене кӗртрӗ те вӗсене ӗçлеме тытӑнма хушрӗ. Кайран нумайӗшне арестлерӗç».

* * *

Полицин «СС» дивизийӗнчи вилнӗ унтер-офицер Иозеф Маршман сумӗнче вӑл унтер-офицер Вилли Грун патне ярса ӗлкӗреймен çырӑва тупнӑ. Çырура çапла каланӑ: «Кӑçалхи хӗлле эпӗ нумай асапсем куртӑм, анчах та чӑтса ирттерӗп тесе шанатӑп. Эпӗ вӗт кивӗ ротӑран тӑрса юлнӑ юлашки 5 çынран пӗри пулса тӑратӑп. Пыйтӑсем нумай асап кӳреççӗ. Эпӗ вӗсене снаряд ванчӑкӗсене курайман пекех курайместӑп. Пире улӑштарӗç тесе кӑшт та пулин шанатӑп, анчах шанӑç нумайӗшне ухмаха ертет...».

* * *

Нимӗçсен фашистла мерзавецӗсем хӑйсем тытса илнӗ совет районӗсенчи халӑха вӗлерсе пӗтереççӗ. Гитлеровецсем Сталино облаçӗнчи Карл Маркс ячӗпе тӑракан шахтӑри 150 рабочие арестленӗ те вӗсене пулеметсенчен персе вӗлернӗ.

* * *

Гитлеровецсем Германи промышленноçӗ валли Париж таврашӗнче рабочисем пухма хӑтланса пӑхни путланса ларнӑ. Лайӑх сӑмахсем пани те, хӑратнисем те пулӑшман. Хальхи вӑхӑтра нимӗç оккупанчӗсем французсем хирӗç тӑнине пӗтерес тесе çӗнӗ репрессисем тӑваççӗ. Май уйӑхӗн пуçламӗшӗнче Париж çыннисенне, Германие кайма килӗшмен пирки, нумайӗшне продовольстви карточкисене туртса илнӗ. Çапла вара пиншер французсем халиччен илнӗ пӗчӗк паека та пулин çухатнӑ, вӗсен выçӑхса вилме лекет.

Çуракине ирттерес тӗлӗшпе пысӑк тухӑçлӑхпа тата лайӑх пахалӑхпа ӗçленӗшӗн, ВКП(б) райкомӗсемпе ӗççынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуçалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми çине çаксене кӗртнӗ:

12. **Калинински районри Ермошкино ялсоветне кӗрекен А. С. Пушкин ячӗпе тӑракан колхоз** (колхоз председателӗ **З. С. Степанов** юлташ). Колхоз ир акмалли тӗштырӑ культурисене 5 ӗç кунӗнче акса пӗтернӗ. Çуртри акмалли çӗр лаптӑкне колхоз пӗтӗмӗшпех яровизациленӗ вӑрлӑхпа акнӑ, ӗçре пысӑк пахалӑх кӑтартнӑ. **Марина Кузьмина** бригади тӗштырӑсене 4,5 ӗç кунӗнче акса пӗтернӗ. Сухаçӑсем—**Н. Петров, Е. Матвеева, Г. Кузьмин** юлташсем кулленхи нормӑсене 130—140 процент тултарса пынӑ, сӳрелекен **Шатаева** юлташ кулленхи нормӑна 130 процент тултарса пынӑ. Ку бригадӑри лашасем пурте лайӑх, мӑнтӑр. Конюх **Иванов** юлташ лашасене пит лайӑх пӑхать. Колхоз оборона фондне хывма планран ирттерсе 3 гектар тырӑ акнӑ.

13. **Октябрьски районри М. И. Калинин ячӗпе тӑракан колхоз** (колхоз председателӗ **Шипов** юлташ). Колхоз тӗштырӑ культурисене 6,5 ӗç кунӗнче акса пӗтернӗ, мӗнпурӗ 244 гектар акнӑ. Чи лайӑх ӗçлекен **П. К. Шипов** бригади тӗштырӑсене 5 ӗç кунӗнче акса пӗтернӗ, бригада хӑй ӗçӗнче пысӑк пахалӑх кӑтартнӑ. Колхозник **А. Красильников** юлташ ака ӗçӗнче вӑрçӑри пек ӗçленӗ, суха тунӑ чухне вӑл кулленхи нормӑна 125—130 процент тултарса пынӑ. Тырӑ акакансем **Д. Копытовпа Алексеев** юлташсем, 13 ретлӗ сеялкӑпа ӗçлесе, кунсерен планра кӑтартнӑ 5 гектар вырӑнне 6—7-шер гектар акнӑ.

14. **Шӑхасан районӗнчи «Красный партизан» колхоз** (колхоз председателӗ **И. В. Васильев** юлташ). Колхоз тӗштырӑсене тата пӑрça-ясмӑк культурисене 5 ӗç кунӗнче акса пӗтернӗ. План тӑрӑх колхозӑн çуртырри 83 гектар акса хӑвармалла пулнӑ, вӑл 85 гектар акнӑ. Планран ирттерсе акнӑ 2 гектар çинчи тырпул оборона фондне тата фашистсен пусмӑрӗнчен ирӗке тухнӑ Хӗвеланӑç облаçӗсенчи колхозсене тӑванла пулӑшнӑ çӗре каять. Ака вӑхӑтӗнче çак юлташсем хӑйсене уйрӑмӑнах палӑртнӑ: 1-мӗш бригадӑн бригадирӗ **В. Ефремов** юлташ, 2-мӗш бригадӑн бригадирӗ **А. Н. Николаева** юлташ. Акара сухаçӑсем: **Г. Тарасов, П. Кириллова, В. Сергеева, А. Антонова, И. Ильина, Т. Егоров** юлташсем вӑрçӑри пек ӗçленӗ, вӗсем кулленхи нормӑна 125—130 процент тултарса пынӑ. Сӳрелекенсем—**В. Филиппова, К. Андреева** юлташсем нормӑна кулленех 140—150 процент тултарса пынӑ. Тырӑ акакансем—**П. Герасимов, И. Федоров** юлташсем кулленхи нормӑна 120—130 процент тултарса пынӑ.

15. **Шӑхасан районӗнчи Шуркасси ялсоветне кӗрекен «1 мая» колхоз** (колхоз председателӗ **П. Александров** юлташ). Тӗштырӑсене колхоз 6 ӗç кунӗнче акса пӗтернӗ. Тӗштырӑ акмалли плана колхоз пур культурӑсем енӗпе те тултарнӑ. Планра кӑтартнӑ пек 56 гектар акса хӑварнӑ. Планран ирттерсе акнӑ 1 гектар çинчи тырпула оборона фондне хывма йышӑннӑ. Тырӑ акакан **С. Константинова** питех те лайӑх ӗçленӗ. Вӑл 11 ретлӗ сеялкӑпа акса нормӑна кулленех 200 процент тултарса пынӑ.

16. **Шӑхасан МТС-ӗнчи тракторсен 7-мӗш бригадинчи тракторист А. Емельянов** юлташ. Уйхирти ӗçсем пуçланнӑранпа майӑн 7-мӗшӗччен вӑл СТЗ тракторпа хӑй сменинче 52 гектар сухаланӑ. А. Емельянов хӑй нормине кулленех ирттерсе тултарса пырать, трактора яланах лайӑх пӑхать.

Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ фрончӗсенче

ЛЕНА

Хӗрачан çийӗнче шалпар кӗрӗк, уринче—арçынӑн пысӑк ботинки. Унӑн пичӗ типсе ларнӑ пек кӑвакскӑн курӑнать, салхуллӑ куçӗсем пӗр пӑнчӑ çине тӗллесе пӑхаççӗ. Çав куçсенче ача кӳлепине вырнаçайми пысӑк хуйхӑ шӑнса хытса ларнӑ. Лена Пиляева 11 çулта çеç, анчах вӑл ватӑ карчӑк пек туйӑнать. Лена хӑрушӑ трагеди тӳссе ирттернӗ. Вӑл ун çинчен лӑпкӑн калаçа пама тӑрать, анчах тӳссе ирттернӗ хуйхӑ çиеле тухать те, хӗрача вара кӑшкӑрса йӗме пуçлать.

Лена Пиляева нимӗçсем патӗнчен тарса килнӗ. Вӑл нимӗç тискер кайӑкӗсем унӑн амӑшне, Анастасия Ларионовнӑна, хӑйӗн виçӗ шӑллӗне, икӗ аппӑшне тата тӑван Волчье ялӗнчи çынсене асаплантарса вӗлерни çинчен калакан хӑрушӑ хыпарсем илсе килнӗ.

Нимӗç вӑрӑ-хурахӗсем çаратнӑ ял темиçе уйӑх хушши ӗнтӗ выçаллӑ-пуçтӑллӑ, çӗрулмипе çеç пурӑнать. Мартӑн 15-мӗшӗнче нимӗçсем çынсене ялтан тухса кайма приказ панӑ. Çынсене, килӗсенчен персе вӗлерессипе хӑратса, хӑвала-хӑвала кӑларнӑ. Арçынсене, старшиксене, пӗчӗк ачасене тата хӗрарӑмсене ялтан конвойпах хӑваласа тухса кайнӑ. Çавсемпе пӗрле Ленӑн икӗ аппӑшӗ Маруçӑпа Оля тата виçӗ шӑллӗ—Саша, Юра тата Леня та пулнӑ. Юра—7 çулта, Леня 9 çулта. Пӗчӗккӗскерсем ывӑннӑ та çул çинчех шӑнса вилнӗ.

Çӗрле пулнӑ тӗле асапланса пӗтнӗскерсем Лапинка ялне çитнӗ. Нимӗçсем пӳрте ӑшӑнма кӗртмен, малалла хӑваласа кайнӑ. Вара татах темиçе километр утнӑ.

«Урӑх каймастпӑр,—тенӗ хӗрарӑмсем.—Пӗчӗк ачасене шӑнтса вӗлеретпӗр. Пирӗн шурӗпӗрех вилмелле»,—тенӗ те каялла çаврӑннӑ. Конвойсем пӑшалсенчен пеме пуçланӑ, вӗсене çапах та чарайман.

Лапинка ялӗнче фашистсем арçынсене суйласа илнӗ те урам кукӑринчех персе вӗлернӗ. Темиçе çынна садра улмуççисенчен çакса вӗлернӗ. Пӗчӗк ачасемпе хӗрарӑмсене колхозӑн пахча-çимӗç хуракан нӳхрепне хуса кӗртнӗ те питӗрсе илнӗ. Ирхине офицер пырса çитнӗ те çапла ыйтнӑ:

— Мӗншӗн каялла çаврӑнтӑр?

— Ачасем шӑнчӗç. Ăçта каймалла пирӗн? Тискер кайӑксем, çынçиенсем!—кӑшкӑрнӑ хӗрарӑмсем.

Нӳхреп алӑкӗнчен гранатӑсем вӑркӑннӑ. Юрӑна, Ленӑн çичӗ çулти шӑллӗне, граната икӗ пая çурса пӑрахнӑ. Унӑн аппӑшӗ Маня та вилсе выртнӑ. Леня хӑйӗнчен юхса кӳлленнӗ юн ӑшӗнче хурлӑхлӑн йынӑшса выртнӑ. Ана никам та пулӑшу пама пултарайман, мӗншӗн тесен амӑшӗнне те хырӑмне çурса пӑрахнӑ.

Çӗр ытла çынран чӗррӗн аллӑ çын çеç тӑрса юлнӑ. Вӗсене урама хӑваласа тухнӑ та тарма хушнӑ. Таракансем çине фашистсем пеме пуçланӑ.

...Шӑнса хытнӑ ачасене пирӗн боецсем кӗтсе илнӗ, вӗсене ӑшӑтнӑ, апат çитернӗ. Ольӑпа Сашӑна госпитале ӑсатнӑ. Лена тӳссе ирттернӗ хӑрушлӑха аса илсе чӗтренӗ, панӑ ыйтусем çине те ответлемен. Ана кӑшт ӑсран кайнӑ пуль тесе шутларӗç. Юлашкинчен вӑл калаçма пуçларӗ, панӑ ыйтусем çине пӗр сӑмахпа ответлесе пычӗ. Хӑйӗн ашшӗултӑ çул каярах вилни çинчен, унӑн ултӑ пиччӗшӗ — Василий, Семен, Павел, Иван, Михаил тата Александр Хӗрлӗ Çар ретӗнче çапӑçни çинчен каласа пачӗ. Унтан хӑй амӑшӗ çинчен ыйтсан «Ой, Мама» тесе кӑшкӑрса ячӗ те пӑтранса кайрӗ.

Итлӗр çак хӑвӑрӑн йӑмӑкӑр кӑшкӑрнӑ сасса, Пиляевсем—Василий, Семен, Павел, Иван, Михаил тата Александр! Фашистла тискерсем сирӗн ватӑ анне вӗлернӗ, сирӗн пӗчӗк шӑллӑрсене Леньӑпа Юрӑна, сирӗн йӑмӑкӑра Маньӑна вӗлернӗ. Нимӗçсем сирӗн тӑван ял çыннисене çуррине ытла вӗлерсе пӗтернӗ, сирӗн ялти вуншар хӗрарӑма, старшиксене, ачасене тусса ярса вӗлернӗ. Тӑвансем, палтӑрланӑр. Сирӗн йӑмӑкӑр кӑшкӑрса макӑрни, унӑн чӗрене ыраттарса кӑшкӑрни сирӗншӗн хаяр тӑшмана пӗр хӗрхенмесӗр тавӑрма чӗнекен сасӑ пултӑр.

* * *

Çак статьяна ман ултӑ çулти ывӑл— Герман вуласа тухтӑр, çакна вуланине ман виçӗ çулти ывӑл Владислав итлетӗр. Ана ман 61 çулти анне, йӑмӑксем, шӑллӑмсем, тӑвансем вуласа тухчӑр.

Çак ӗç пулса иртнӗ фронт, çак ял манран мӗнпурӗ те 10 километрта çеç. Эпӗ çав ял еннелле мӗнпур паттӑрлӑхпа пӗчӗк ачасене, ача амӑшӗсене, старшиксемпе карчӑксене фашистла тискер кайӑксенчен сыхлама каятӑп. Çак йӗркесене эпӗ тупӑсемпе орудисем кӗрленӗ хушӑра çыратӑп.

И. СТОЛЯРОВ.

2-мӗш рангри военврач,

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Ӗç тухӑçлӑхӗ ӳсрӗ

КАНАШ, майӑн 13-мӗш. (**Телефонпа**). Вагонсем юсакан цех коллективӗ хӑйӗн 10 кун хушшинчи ӗç итогӗсене турӗ. Коллектив 10 кунлӑх плана ытлашшипех тултарнӑ. Уйрӑмах Дмитриев, Чернухин, Чесов тата Марченко юлташсен фронтовой бригадисем лайӑх ӗçлеççӗ. Дмитриев юлташӑн бригади, сӑмахран, вагонсем юсас тӗлӗшпе панӑ çур уйӑхлӑх задание 12 кун хушшинчех тултарчӗ.

Заводра Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказне ӑнлантарса панӑ хыççӑн ӗç тухӑçлӑхӗ палӑрмаллах ӳсрӗ. Халиччен нормӑна 200 процент тултарса ӗçленӗ стахановецсем халӗ 300 процент тултарма пуçларӗç. Тимӗр-тӑмӑр шӑратакан цехри Лиховец, Коршенина юлташсем майӑн 11-мӗшӗнчи задание 300-шер процент ытла, Подвиженко юлташ 296 процент тултарчӗç.

Ремонтно-механически цехри Кругляковпа Миньков рабочисем те нормӑпа пӑхнинчен 3—4 хут тухӑçлӑрах ӗçлеççӗ.

Г. СОРОКИН.

Заводри партбюро секретарӗ.

Çӗнӗ обязательствӑсем илеççӗ

Авиацие металлурги промышленноçӗнче малта пыракансем çӗршывпа фронта ытларах металл, кӑмрӑк, самолетсем, моторсем парас тӗлӗшпе пӗтӗм Союзри ӑмӑртӑва пуçарса ячӗç, предприятисене çак ӑмӑртӑва хутшӑнма чӗнсе каларӗç. Çак кунсенче Çӗмӗрле комбиначӗнчи рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем металлургсемпе авиастроительсен чӗнӗвне хӑйсен цехӗсенчи митингсемпе пухусенче сӳтсе-яврӗç. Цех коллективӗсем, металлургсемпе авиастроительсен чӗнӗвӗ çине ответлесе, май уйӑхӗнчи ӗç планне ытлашшипех тултарма пулаççӗ. Сӑмахран, Станюлин юлташ ертсе пыракан цех коллективӗ плана 110 процент тултарма обязательство илчӗ.

Комбинатра Назаровпа Новохатный юлташсем ертсе пыракан цехсем уйрӑмах лайӑх ӗçлеççӗ. Вӗсем çак уйӑхри 10 кунхи плана 2 хут ирттерсе тултарчӗç. Металлургсемпе авиастроительсен чӗнӗвне сӳтсе-явнӑ хыççӑн тата тухӑçлӑрах ӗçлеме пулса хӑйсем çине обязательствӑсем илчӗç.

Х. ЛИСИН.

ÇӖМӖРЛЕ, майӑн 13-мӗш. (**Хамӑр корр.**).

ВӖРЕНӲ ПУНКЧӖСЕН СОЦИАЛИЗМЛӐ ӐМӐРТӐВӖ

ЕТӖРНЕ. Всевобучӑн Балдайри пункчӗ Катӑшри пунктпа социализмлӑ ӑмӑртӑва тухнӑ. Балдайри пунктра вӗренекенсем хӑйсен обязательствисене чыслӑн пурнӑçа кӗртме тӑрӑшаççӗ, занятисене пӗр сиктермесӗр тата вӑхӑтра çӳреççӗ. Уйрӑмах 2-мӗш взвод çар ӗçне лайӑх вӗреннине кӑтартрӗ. Ку взводӑн боецӗсем хушшинче «отлично» паллӑ илекенсем йышлӑ.

Вӗренӳ пункчӗн комиссарӗ Г. Герасимов юлташ боецсем хушшинче Совет Информаци бюровӗн пӗлтерӗвӗсене каласа кӑтартать, вӑрçӑри эпизодсене вуласа парать. Кашни взводрах стена хаçачӗсем тухса тӑраççӗ. Вӗсенче боец-отличниксем хӑйсем мӗнле вӗренни çинчен çырнӑ статьясем чылай.

Сталин юлташӑн приказӗ çине ответлесе, всевобуч боецӗсем хӗçпӑшалсене тӗплӗн вӗренме, пӑшалран тӗл пеме хӑнӑхса çитме тӑрӑшаççӗ.

В. ЛАЗАРЕВ.

Çуракине ирттерес ĕçре Первомайски тата Шăмăршă районĕсем халĕ те юлса пыраççĕ

Çураки республикăра мĕнле пырать

Республикăра майăн 10-мĕш тĕлне пурĕ 78.798 гектар акнă. Çуракинче, малтанхи пекех, Калинински район малта пырать. Кунта майăн 12-мĕш тĕлне пурĕ 8.150 гектар сухаланă, 7.215 гектар акнă. Районри 44 колхоз тĕш-тырă культурисене акмалли плана ăнăçлăн пурнăçланă.

Çуракине кĕске срокра ăнăçлăн туса ирттерессишĕн Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски, Шăхасан, Çĕмĕрле, Вăрмар районĕсенчи чылай колхозсем кăтартуллăн ĕçлеççĕ. Çураки планне пурнăçлас тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай районĕ Калинински районĕ хыççăн пĕрремĕш вырăнта тăрать, иккĕмĕш вырăн — Красноармейски район йышăнать.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем, ĕçĕн хăвăртлăхне кунран-кун ÿстерсе пырса, майăн 10-мĕш тĕлне çураки планне 44,7 процент пурнăçланă.

Шăхасан районĕ иртнĕ çул майăн 10-мĕш тĕлне çураки планне 3,1 процент тултарнă. Кăçал районри чылай колхозсем, ĕçе вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа туса пырса, майăн 10-мĕш тĕлне 6.115 гектар акнă, çураки планне 39,3 процент тултарнă.

Çĕмĕрле районĕ çуракине пысăк хастарлăхпа тухрĕ пулсан, çав хастарлăха ĕçре малалла çĕклесе пыраймарĕ. Район çураки ĕçĕнче малтанхи пилĕк кун хушшинче республикăра иккĕмĕш вырăн йышăннă пулсан, халĕ пиллĕкмĕш вырăна кусрĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, кăçалхи çураки иртнĕ çулхинчен чылай йĕркелĕрех тата пысăкрах хăвăртлăхпа пулса пырать. Ку вăл çапла пулмалла та.

СССР Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланнă колхозниксем кăçалхи çуракинче нихăçанхинчен те хастарлăн ĕçлеççĕ. Анчах та колхозниксен пысăк пултарулăхне республикăри хăшпĕр районсенче организацилеме пĕлмеççĕ. Кăна çураки ĕçĕсем епле пыни лайăх кăтартса парать.

Первомайски, Шăмăршă, Комсомольски, Улатăр, Кусахино районĕсем çуракинче чăтма çук кая юлса пыраççĕ. Первомайски район иртнĕ çул майăн 10-мĕш тĕлне çураки планне 16,4 процент пурнăçланă пулсан, кăçал питех те кая юлса пырать. Кунта çуртырри-сем акмалли плана мĕнпурĕ те 6,7 процент кăна пурнăçланă. Çакăн пек ĕçлемелле-и халĕ, вăрçă вăхăтĕнче? Шăмăршă, Кувакино районĕсем те çураки ĕçĕнче республикăна каялла туртса пыраççĕ. Ĕçĕн хăвăртлăхĕ Пăрачкав, Елчĕк, Тăвай, Етĕрне районĕсенче те çителĕклĕ мар.

Çураки ĕçне чăсса пыни тырпул тухăçне чакарни пулать. Çакна пурин те ăнланмалла. Колхозниксен ĕçлес хастарлăхне малалла çĕклесе пырса, çуракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттермелле.

Хĕрлĕ ялавлă Чкаловски район çуракин малтанхи кунĕсенче пулнă йăнăшсене хăвăрт тÿрлетсе пырать. Колхозниксен массине ĕçе татах та вăйлăнрах мобилизацилесен, район çуракине ăнăçлăн вĕçлесе Хĕрлĕ ялава хăйĕн аллинче хăварма пултарать.

Канаш районĕ хăвăртлăхшăн çеç тăрăшса, çуракин пахалăхĕ çине çителĕклĕн çавăрăнса пăхмасть. «Комбайн» колхозра çĕре 3,5 сантиметр тарăнĕш çеç сухалаççĕ, Çĕнĕ Аччари Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз 60 гектар çĕр лаптăкĕ çине сухаламасăр е культиваци тумасăрах тырă акнă. Район коксагыз акас тĕлĕшпе ялăх ĕçлет.

Малтанхи кунсенчи çитменлĕхсене халех тÿрлетмелле, çураки ĕçĕсене фронтри пек хăвăртлăхпа тата пысăк пахалăхпа вĕçлемелле.

Ĕçе организацилеме пĕлмеççĕ

КАНАШ, майăн 13-мĕш. (Хамăр корр., телефонпа). Киров, Чкалов, Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем паян пĕрчĕллĕ культурăсене акса пĕтереççĕ. Анчах пĕтĕмĕшпе илсен, районри чылай колхозсенче çурхи уйхир ĕçĕсем кая юлса пыраççĕ-ха. Сухайкассинчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз, акана тухнăранпа 7 кун иртнĕ пулсан та, çуракин планне 40 процент çеç пурнăçланă.

Ака ĕçĕ кая юлса пыни колхозсенче ĕçе начар организацилениинчен килет. Молотов ячĕпе тăракан колхозăн 2-мĕш бригадинче суха тăвакансем А. Савов, С. Осипов, П. Романов, Д. Никаноров юлташсем ĕç нормине тултараймаççĕ. 3-мĕшпе 4-мĕш бригадăсенче ĕç нормине тултарса ĕçлекенсем пачах çук.

— Вăрлăха çителĕклĕ таран турттарса çитерейменрен пирки тырă акас плана вăхăтра пурнăçлаймастпăр, тесе пăшăрханаççĕ Р. Димитриевпа Г. Павлов колхозниксем.

Вĕсем акана тухнăранпа мĕнпурĕ те 24 гектар çеç акнă. Вăрлăха çителĕклĕ таран турттарса панă пулсан, кăна вĕсем 3—4 кун хушшинче акса пулĕччĕç. Колхоз руководителĕсен ĕçре оперативность çук.

Вăрлăх турттарма пĕр лаша çеç уйăрнă. Уйсем 5—6 çухрăмра. Паллах, пĕр лашапа турттарса çитерме май çук. Çав вăхăтрах ферма лаши ахалех тăрать. Колхоз председателĕ ку ĕçе вăхăтра татса памасть.

Колхозра массăллă ăнлантару ĕçĕ пачах çук. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çуракине ăнăçлăн ирттермелли мероприятисем çинчен йышăннă постановлени колхозниксене ăнлантарса паман. Колхозниксем ĕç нормисене те пĕлмеççĕ. Колхозниксен ĕçне вăхăтра шута илсе пымаççĕ. Колхозра агитацие ăнлантарулла ĕçе туса пыма ялти шкулăн учителĕсене çирĕплетнĕ. Анчах вĕсенчен чылайĕшĕ колхозниксем ĕçленĕ çĕре пĕрре те тухса курман. Стена хаçачĕсем тухмаççĕ.

Çуракин хăвăртлăхне ÿстермелле. Тырăсене вăхăтра акса хăвармалла. Анчах колхоз председателĕсем те, районри руководительсем те ĕçе кирлĕ пек тытăнман-ха.

Куллен 150 процент

Оттякасси ялсоветĕнчи 4 колхоз пĕр-пĕрне ăмăртса ĕçлеççĕ. Сталин юлташ Майăн 1-мĕшĕнче панă приказа вуланă хыççăн колхозсенче ĕç тухăçлăхĕ татах та ÿсрĕ.

Ăмăртура «Красное Отчество» колхоз малта пырать. Уйрăмах 2-мĕш бригада паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Бригадăна вăрçă фронтĕнчен таврăннă боец А. Краснов ертсе пырать. 7 лашапа суха туса, бригада кулленхи ĕç нормине 150-шар процента çити тултарать. В. Афанасьев, Е. Морозова, Е. Лепешкин, А. Иванова колхозниксем, çавăн пекех 15 çулти В. Иванова, Н. Краснов çамрăксем талăкне 0,55 гектар сухалас вырăнне 0,74 гектар сухалаççĕ. Çуракинче ĕç нормине ытлашшипех тултарса пынăшăн вĕсене ĕçкунĕсем икĕ хут ÿстерсе параççĕ. Çапла май вĕсем кашни кун 4-шар ĕçкунĕ ĕçлесе илеççĕ.

Колхозниксен ĕçлес кăмăлĕ пысăк, вĕсем уяр кунăн кашни сехечĕпе усă курма тăрăшаççĕ. Ирхине 3 сехетрех хире тухса тĕттĕм пуличченех ĕçлеççĕ, кăнтăрлахи апат тума та яла кĕмеççĕ. Лашасене те уйрах тăрантараççĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

ИШЛЕЙ.

Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз çуракинче мĕнле ĕçлерĕ

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ пире, колхозниксене, çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах туса пама хушать. Сталин юлташ сăмахне асра тытса, кăçалхи çуракине пирĕн колхоз тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕ. Ĕç вăйне шута илсе звеносем, бригадăсем организацилерĕмĕр. Кăçалхи ĕçсен калăпăшне тĕплĕн шута илсе план турăмăр, вăл план тăрăх çуракинчи ĕçсен йĕркине звеносемпе бригадăсене, кашни колхозника ăнлантарса патăмăр. Ĕçе самăр лашасемпе тухрăмăр.

Çуракинчи ĕçсене кĕрхи калчасене апатлантарнинчен тытăнтăмăр. Пурĕ 45 гектар çинчи кĕрхи калчасене апатлантартăмăр, 18 гектар çинчи калчасене сÿрелерĕмĕр.

Çуракин малтанхи кунĕнчех колхозниксен, колхозницăсен ĕçлес хастарлăхĕ вăйлă пулчĕ. Ĕçе харăс тытăнса хастарлăн тунипе 8 кун хушшинче çураки планне ăнăçлăн пурнăçларăмăр, 379 гектар çине пĕрчĕллĕ тырăсем акрăмăр, вăл шутран 150 гектар сĕлĕ, 90 гектар тулă, 26 гектар урпа, 28 гектар ясмăк тата ытти культурăсене те акса çитертĕмĕр. Кунсăр пуçне çĕнĕ культурăна — кок-сагыза акрăмăр.

Çураки планне ăнăçлăн пурнăçланă хыççăн пирĕн колхоз нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма тата çĕршыв оборонин фондне хывма 10 гектар тырă акса хăварчĕ.

Ака ĕçĕнче уйрăмах 4-мĕш, 3-мĕш, 8-мĕш бригадăри колхозниксемпе колхозницăсем кăтартуллăн ĕçлерĕç. Сурхи тырăсене ку бригадăсем 6—7 кун хушшинче пысăк пахалăхпа акса çитерчĕç. Кăçалхи акара уйрăмах хĕрарăмсен нумайрах ĕçлеме тиврĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ фронта кайнă арçынсем вырăнне тăрса фронтри пек ĕçлеме тытăнчĕç. Бригадир Степанов юлташ фронта кайрĕ. Унăн вырăнне Степанова Васса тăчĕ. Ĕç фронтĕнче вăл, çапăçу фронтне кайнă упăшки пекех, пĕтĕм хастарлăхне хурса ĕçлет. Степанова Васса бригади çураки планне 7 кун хушшинче пысăк пахалăхпа вĕçлерĕ. Анна Денисова, Клавдия Васильева, Ксения Сергеева, Мария Куракина колхозницăсем суха тунă çĕрте нормăна 2 хут ирттерсе пурнăçласа пычĕç. Çавăн пекех сÿрелекенсем: Татьяна Артемьева, Дария Николаева юлташсем те стахановла хăвăртлăхпа ĕçлерĕç.

Пирĕн колхозра пурĕ 9 бригада, вĕсенчен тăваттăшне хĕрарăмсем ертсе пыраççĕ. Çураки вăхăтĕнче 30 ача валли ясли, 3 çĕрте столовăйсем йĕркеллĕн ĕçлерĕç. Вĕсем пире ĕç тухăçлăхне хăпартма вăйлăн пулăшрĕç.

Кăçалхи çураки пирĕн колхозра пысăк çĕкленÿпе пулса иртрĕ. Колхозниксем, колхозницăсем пурте хушнă ĕçе фронтри пек хăвăрт тата тĕплĕн пурнăçласа пычĕç. Ĕçрен пăрăнса çÿрекен е хушнă ĕçе вăхăтра пурнăçламасăр хăваракан пĕр çын те пулмарĕ.

Ватă колхозниксем çамрăккисене ĕçре вĕрентсе пычĕç. Колхозник Кирилл Емельянов — Назар Михайлова, колхозник Антон Ефимов—Нина Петровнăна вĕрентсе, пулăшса пычĕç. Ĕçе кăçал малтанхи хут тăнă çамрăксем те нормăна тултарса пычĕç.

Ĕçе пысăк хастарлăхпа тума пире Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă историллĕ приказ хавхалантарчĕ, партипе правительство «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен» йышăннă постановлени тата ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке пысăк вырăн йышăнса тăчĕç.

Çуракине эпир ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр. Анчах ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсем пуçланчĕç кăна-ха. Çуракине ăнăçлăн ирттернипе пулас вăйлă тырпулăн никĕсне кăна хутăмăр. Малалла пулакан ĕçсем татах пысăк. Халĕ тунă çитĕнÿсене эпир малалла татах вăйлатса пыратпăр.

П. ЯКИМОВ.

Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Пурте пĕр шухăшлăн ĕçлетпĕр

Ыран çуракине тухас тенĕ кун колхозра пуху пулса иртрĕ. Пухура эпир Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказне итлерĕмĕр, çуракине массăллăн тухас куна палăртрăмăр. Тепĕр кун ир-ирех пĕр çын пек харăссăн çураки ĕçне тытăнтăмăр. Колхозниксемпе колхозницăсем малтанхи кунах ĕçе пысăк юратупа тума тытăнчĕç.

Сухаçсем пысăк пахалăх кăтартса ĕçлерĕç. Михаил Назаров, Антон Ефимов юлташсем кунне 6-шар гектар сÿрелесе пычĕç, Николай Семенов колхозник талăкне 3-шер гектар çурă тырă акрĕ. Çуракинче Петрова, Ефимов, Каховский, Фомин, Семенов çамрăксем те лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç.

Колхозниксем ĕç дисциплинине çирĕп тытса тăраççĕ. Вăл çапла пулмалла та. Çĕршывра вăрçă пырать. Пĕтĕм вăя ĕçе хумалла. Çак вăхăтра ĕç дисциплинине хавшатма пăхакан çын айăпа кĕрет.

Эпир пĕр шухăшпа ĕçлетпĕр: нимĕç оккупанчĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкса çĕнтерÿ тума çĕршывпа Хĕрлĕ Çара пулăшу пама тăрăшатпăр.

Л. ЯКОВЛЕВ.

Киров ячĕпе тăракан колхозри 4-мĕш бригадăн бригадирĕ.

Агитаци ĕçне çĕнĕ çынсем хутшăнчĕç

Колхоз сумĕнчи агитколлектив хăйĕн пĕтĕм вăйне çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерессi çине хучĕ. Çураки вăхăтĕнче агитаци ĕçне уйра туса пытăмăр.

Çуракине тухнă кунах бригадăсенче стена хаçачĕсем кăлартăмăр. Сталин юлташăн приказне вуласа ăнлантартăмăр. Çак кунсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе колхоз активĕнчен çĕнĕ çынсем хутшăнчĕç. Васса Степанова колхозниксене ĕçленĕ пушăрах Сталин юлташ приказне вуласа панă. «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен» йышăннă постановлени тата ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке çинчен каласа пачĕ. Агитаци ĕçĕ вырăнти тĕслĕхсемпе çыхăнса пырать.

Çакăн пек ĕçленин усси пысăк. Колхозниксем çуракинче паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ, социализмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Комсомолка Кучина юлташăн бригади Симонова юлташ бригадипе ăмăртса ĕçлерĕ. Çуракине 7 кун хушшинче вĕçлерĕç. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлекен Яковлевпа Степанова юлташсен бригадисем çуракине 6 кун хушшинче вĕçлерĕç. Бригадăри стена хаçачĕсем тата колхозăн стена хаçачĕ ĕçри паха тĕслĕхсене анлăн çутатса тăраççĕ, колхозниксен массине ĕçе мобилизацилес тĕлĕшпе вĕсем тивĕçлĕ вырăна йышăнса тăраççĕ.

Большевикла агитацин вăйне пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçе хуратпăр.

В. ИМЕНДЕЕВА.

Киров ячĕпе тăракан колхозри агитколлективăн руководителĕ.

Фашистла Италин шалти йывăрлăхĕсем

СТАМБУЛ, майăн 12-мĕш. (ТАСС). Италире çак кунсенче провинцисенчи префектсен канашлăвĕ пулса иртнĕ, унта Муссолини сăмах тухса каланă. Сăмахĕнче вăл Италирн пурнăç продовольстви тĕлĕшĕнчен йывăрланса çитнине кăтартса панă. Гитлеровецсен «Донауцейтунг» ятлă хаçатĕнче пичетленсе тухнă Муссолини сăмахĕнчен вăл уйрăмăнах «çăкăр паекне тата ытларах пĕчĕклетме кирли» çинчен асăрхаттарни курăнать. Малалла Муссолини Италире ĕç вăйĕ çителĕклĕ марри çинчен каланă. Ĕç вăйĕ çителĕксĕрри уйрăмăнах хальхи вăхăтра фронтсенче пысăк çухатусем тÿснĕ пирки тата нумай рабочисене Германие янă хыççăн хытă сисĕннине палăртса панă Муссолини. Муссолини ĕç вăйне вăрçă вăхăтĕнчи йĕрке тăрăх мобилизацилемелли çинчен тата «вăрçă хушнисене тума килĕшмен çынсене» чи хаяр йĕркесемпе айăпламалли çинчен хăратса каланă.

Итали влаçĕсем пĕтĕм çĕршывĕпех строительство материалĕсене: известь, цемент, кирпĕч, касса хатĕрленĕ йывăç, кĕленче тавраш тата ыт. те хысна аллине тытса илни çинчен пĕлтернĕ. Итали правительстви кăларнă распоряжени тăрăх, килçуртра кирлĕ япаласене тунă çĕре нимĕнле металл та памалла мар. Хутмалли япаласем парас нормăна татах пĕчĕклетмелле тăваççĕ.

Итали халăхĕ вăрçа пула тата Муссолини политикине пула тарăхасси ытларах та ытларах ÿссе пырать, ку ĕнтĕ фашистсене те шиклентерме тытăнать. Фашистсен правительствин ĕçĕсене халăх йышăнмасăр хирĕçни çинчен калакан фактсем Итали хаçачĕсенче те тăтăшрах курăнма пуçлаççĕ.

Паянхи Германире

АНКАРА, майăн 12-мĕш. (ТАСС). Пĕр нейтральнăй çĕршыв çынни, хĕлĕпех Германире пурăннă хыççăн халĕ çеç Турцие килнĕскер, Германири паянхи пурнăçа сăнласа кăтартать. Вăл каласа панă тăрăх, нимĕçсен психикине хытăрах туртса çыхмалла килет. Германире пилĕк уйăх — декабрьтен апреле çитиччен — пурăнса, вăл нимĕçсем шухăшкăмăл тĕлĕшпе питех те нумай улшăннине хăй куçĕсемпех курнă; вăрçăра Германи çĕнтересси çине нимĕç халăхĕ ытларах та ытларах ĕненми пулса пырать. Çак çын каласа панă тăрăх, вăл Германие пырса çитнĕ вăхăтра, декабрь уйăхĕнче, гитлеровецсем Германи çĕнтерĕвĕ çинчен хыттăн кăшкăрашнă. Анчах та апрель уйăхĕнче нимĕçсен сăн-сăпачĕ салхуланнă, халĕ ĕнтĕ çĕнтерÿ çинчен нихăçан та калаçман пекех туйăнать. Нимĕçсен кăмăлĕ çакăн пек ÿкни, çав хăй курнă çын каласа панă тăрăх, Германин Российăри ĕçĕсем хĕл вăхăтĕнче ăнманнинчен тата Германири пурнăç ĕçме-çиме тĕлĕшĕпе пĕрмаях начарланса пынинчен килет. Гитлер çарĕн офицерĕсем продовольстви тавраш сутса спекуляци тăваççĕ. Нимĕç çынни хăй илме тивĕçлĕ пĕчĕк паекăн çуррине те илсе тăраймасть.

Хăй курнă çын каласа панă тăрăх, Берлин урамĕсем çавтери хуйхăллăн курăнаççĕ. Вĕсенче час-часах сăмсасăр, хăлхасăр, алсăр, урасăр инвалид-салтаксене курма пулать. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче Германи çарĕ пысăк çухатусем тунă пирки, халĕ ĕнтĕ нимĕçсем çул çитмен ачасемпе стариксене те çар ретне илеççĕ. Çак çынна унăн Германири тусĕсем каласа панă тăрăх, Германи университечĕсенчи аудиторисем пушă пекех тăраççĕ.

Люксембургра Германие хирĕçле демонстрацисем

ЛОНДОН, майăн 10-мĕш. (ТАСС). Люксембургри «Национальбланк» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, халăхран лашасене гитлеровецсем туртса илнĕ чухне Люксембургра Германие хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Демонстрантсем патриотла юрăсем юрланă тата Германие хирĕçле лозунгсем кăшкăрнă. Демонстрацисенче çынсем нумай пулнă. Хулара пурăнакансем çуртсенчен тухса демонстрантсем çумне пĕрлешнĕ. Нумай çынсене арестленĕ. Çав хаçатах çапла пĕлтерет: Люксембург çынни Фогт, Гитлера саламласа калас вырăнне, «Хайль Москау» («Сывă пултăр Мускав»), тесе кăшкăрса ответленĕ, çавăншăн ăна тĕрмене хупмалла тунă. Çакăн пеккисем пĕрре кăна мар, тесе кăтартать хаçат.

ПАРИЖ РАДИОСТАНЦИЙĔ СТРОЙРАН ТУХНĂ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Парижри вăрăм хумсем çинче ĕçлекен радиостанци, Германи контролĕ аллинче тăраканскер, майăн 9-мĕшĕнчи ирхине 10 сехет тĕлĕнче ĕçлеме чарăннă та майăн 12-мĕшĕнчи ирччен пĕр шарламасăр тăнă. Виширен илнĕ хыпарсем тăрăх, çак радиостанци ĕçлеме чарăнни ăна такам диверсиллĕ ĕçсем туса пăснинчен килнĕ. Передатчикăн антеннисене динамитпа сирпĕнтерсе янă. Париж радиостанцийĕ халиччен Германи пропагандине Европăра саракан вăйлă вырăнсенчен пĕри пулса тăнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: çыранри авиацин самолечĕсем противникăн суднисене сĕнĕрен атакăланă. Майăн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин самолечĕ Мандаль (Норвегия) çывăхĕнче противникăн грузсем турттаракан пароходĕ çине бомбăсем пăрахса сиенленĕ. Майăн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле тепĕр самолет, Норвеги çыранĕсем патĕнче патрульре çÿрекенскер, Олесунд çывăхĕнче противникăн суднисен караванне асăрханă. Самолет караванри пысăкрах пароход çине тапăннă, ăна темиçе бомбăпа сиенленĕ те, ун çинче пушар тухнă.

Мальта тĕлĕнчи сывлăшри пысăк çапăçусем

ЛОНДОН, майăн 12-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕн черетлĕ коммюникинче çапла кăтартса панă: майăн 9-мĕшĕнчи кăнтăрларан пуçласа майăн 10-мĕшĕнчи кăнтăрлаччен Мальта çинче тĕнĕл çĕршывĕсен 18 самолетне персе ÿкернĕ. Вĕсенчен вуниççĕшне — истребительсем, пиллĕкĕшне — зенитнăй артиллерирен персе пĕтерсе тăкнă. Унсăр пуçне тăшманăн чылай самолечĕсем хыттăн сиенленнĕ пулнă, вĕсем хăйсен базисене таврăнма пултарайман та пулĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чебоксарскому кинотеатру
ТРЕБУЮТСЯ
ученики киномеханика-звуковика, пожарник, слесарь, кочегар парового отопления.

Тимĕр-тăмăр пухас ĕçе вăйлатар

Отечественнăй вăрçă металл нумай ыйтать. Металл вăл танксем, самолетсем, тупăсем, винтовкăсем тума кайть. Халыхи вăхăтра пĕр хĕçпăшала та металсăр тума çук. Çавăнпа та металл пирĕн оборона промышленноçне питех те кирлĕ.

Металл хатĕрлес ĕçре тимĕр-тăмăр пухни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн кашни предприятире, колхозра, килри хуçалăхра кирлĕ мар тимĕр татăкĕсем пур. Ăна пухса оборона промышленноçне парсан, çĕршыва пысăк усă пулать.

Пирĕн республикăра тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе ятарласа ĕçлеме тивĕçлĕ организацисем — Союзутильпе Чăвашпотребсоюз пур. Республикăра иккĕмĕш кварталта тимĕр-тăмăр пухмалли мĕнпур хисепрен 88 процентне çак организацисен пухас пулать. Вĕсем лайăх ĕçленинчен иккĕмĕш квартал планне тултарасси килет.

Мĕнле ĕçлерĕç-ха вĕсем пĕрремĕш кварталта? Вĕсем нихăшĕ те пĕрремĕш кварталта тимĕр-тăмăр пухса памалли плана пурнăçа кĕртмерĕç. Çавна пула республикăра пĕрремĕш кварталта тимĕр-тăмăр пухса памалли плана 13,7 процент кăна тултарнă.

Чăвашпотребсоюз районсенче тимĕр-тăмăр пухас ĕçе çителĕксĕр ертсе пырать. Çавăн пирки чылай райпотребсоюзсем çак ĕç çинчен манса кайнă. Сăмахран, Канашпа Вăрмар райпотребсоюзĕсем тимĕр-тăмăр пухса памалли плана 1—4 процент анчах тултарнă, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ, Шăмăршă райпотребсоюзĕсем ку тĕлĕшпе пачах ĕçлемен. Райсовет исполкомĕсем райпотребсоюзсемпе союзутилĕн районри конторисем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Тимĕр-тăмăр пухас ĕçе комсомолецсемпе пионерсене çеç мар, пур ĕççынниcене те хутшăнтармалла. Тимĕр-тăмăр пухса парас ĕçе çитес вăхăтрах вăйлатса, иккĕмĕш квартал планне ирттерсе тултарар.

И. Ф.

Столовăйсен ĕçĕсене лайăхлатассишĕн тăрăшмаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Чăвашторг отделенин пĕрремĕш столовăйĕ хулара чи пысăкки шутланать, унта пĕр вăхăтрах 100 çын ытла апатланма пултарать. Анчах столовăйра апат пахалăхĕ начар. Столовăйра таса мар. Официанткăсем çавăрăнуçăсăр ĕçленипе пула, сĕтел çийĕсем яланах йĕпе, тирпейсĕр, апата час-часах çуса тасатман чашăксемпе параççĕ.

Виççĕмĕш столовăйра та çитменлĕхсем сахал мар. Кунта кашни кун тенĕ пекех пĕр тĕслĕ апат (рассольник е кăмпа яшки) пĕçереççĕ. Апат çисе тухас пулсан, сахалтан та пĕр сехет кирлĕ. Мĕншĕн тесен официанткăсем чăн малтанах хăйсен «çывăх юлташĕсене» тăрантараççĕ, вĕсенчен укçа илнĕ чух 10—12 минута калаçса ирттереççĕ.

Çакăн пек çитменлĕхсем ытти столовăйсенче те пур. Вĕсем çинчен клиентсем жалобăсем те чылай çырнă, сăмахпа та каланă. Анчах суту-илÿ работникĕсем вĕсем çине çавăрăнса та пăхмаççĕ.

Пăхас, акă, жалоба кĕнекисем çине. Унта пĕр ыйту çине те кирлĕ пек ответ паман. Виççĕмĕш столовăйра жалобăсем çине иртнĕ çулти ноябрь уйăхĕнчен вара, пĕрремĕш столовăйра, — 7 уйăх ытла ответ паман. Пĕрремĕш столовăй заведующийĕ Леонов, çавăн пекех буфетчицăсем те, жалоба кĕнеки ыйтсан вăрçма тытăнаççĕ; юлашкинчен вара, «жалоба кĕнеки çук», теççĕ.

Столовăйсенче апат пахалăхĕ япăххи пĕтĕмпех вĕсен руководителĕсенчен килет. Ытти çулсенче Чăвашторг отделенийĕ пахча-çимĕçсем кĕркуннех хатĕрленĕ пулнă, иртнĕ çулта темшĕн апла туман вара; çĕрулми планне палăртнинчен пĕтĕмпе те 24 процентне çеç хатĕрленĕ, купăста т. ыт. пахча-çимĕçсем хатĕрлес тĕлĕшпе те плана тултарман.

Çĕмĕрлере пурăнакансен хисепĕ хăвăрттăн ÿссе пырать. Апла пулсан, столовăйсем ытларах уçмалла пек. Ку енĕпе те нимĕнле улшăну туни те курăнмасть.

Ушкăнпа апатланас ĕçре çакăн пек çитменлĕхсем пирки ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕнче пĕлеççĕ. Анчах вĕсем çак чи кирлĕ ыйтупа интересленсе, ăна лайăхлатас тесе, конкретно ĕçлени курăнмасть.

Х. ЛИСИН.

Мариинско-Посадский техникум землеустройства и мелиорации НКЗема РСФСР

ОБ"ЯВЛЯЕТ

прием студентов на первые курсы землеустроительного и гидротехнического отделений

Гидротехническое отделение готовит гидротехников со средним образованием, хорошо обладающих знанием производства работ по изысканиям, проектированию и строительству гидротехнических сооружений (плотины, водосливы, водоспуски, трубчатые и шахтные колодцы), осушению заболоченных земель, орошению земель, искусственному дождеванию, мелкому и глубокому бурению, а также по строительству водопроводов и гидроэлектростанций для колхозов, совхозов и МТС.

Землеустроительное отделение готовит техников-землеустроителей, хорошо знающих геодезическую технику по горизонтальной и вертикальной с'емке (теодолитная, мензульная и производство невелировки) для составления сельскохозяйственной карты, проектирования дорожной трассы, для проектирования и строительства промышленных и жилых сооружений, отвод, планировку хозяйственных центров МТС, совхозов и колхозов.

Срок обучения 3 года.

Лица в возрасте от 15 до 35 лет, желающие поступить в техникум, имеющие образование не ниже неполной средней школы, должны подавать заявления по адресу: Мар-Посад, Чувашской АССР, ул. Ленина, 3, техникум землеустройства и мелиорации, в приемную комиссию, не позднее 25 августа сего года с документами: 1) об образовании, 2) о рождении, 3) о здоровье, 4) автобиографии, 5) 2 фотографические карточки.

Окончившие в 1941 и 1942 г. неполную среднюю школу, 8-й, 9-й и 10-й классы средней школы принимаются на 1-й курс техникума без испытаний. Без испытаний принимаются также лица, демобилизованные из рядов РККА, имеющие подготовку не ниже семи классов неполной средней школы, независимо от времени ее окончания, а все остальные поступающие подвергаются приемным испытаниям с 25 по 30 августа по предметам: 1) математика, 2) русский язык и литература, 3) физика, 4) Конституция СССР в об'еме программы неполной средней школы.

Все принятые будут обеспечены общежитием и постельными принадлежностями.

Принятые как отличники учебы, а также выдержавшие приемные испытания по всем четырем предметам с отметками «отлично», будут обеспечены государственной стипендией.

Начало учебных занятий с 1 сентября 1942 года.

4 — 1 ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 489 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: я: